26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1944 МАРТ 18 ШАМАТКУН 55(6550) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне К О Н Е В А

УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, ĕнер мартăн 15-мĕшĕнче, танковăй соединенисемпе пехота çав тери хăвăрт атакăланипе, ВАПНЯРКА хулипе пысăк чугун çул узелне туртса илнĕ, çапла вара ЖМЕРИНКАПА ОДЕССА хушшинчи питĕ паха чугун çула татнă.

ВАПНЯРКАНА туртса илессишĕн пынă çапăçусенче генерал-лейтенант ... танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕ БОГДАНОВАН, танковăй çарсен генерал-майорĕ ДУБОВОЙАН танкисчĕсем тата ТРОФИМЕНКО генерал-лейтенантăн ЖМАЧЕНКО генерал-лейтенанчĕн çарĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве паллă тăвас тесе, ВАПНЯРКАНА ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсĕсене «ВАПНЯРСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе награда парса тăратас.

Паян, мартăн 16-мĕшĕнче, 21 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуниккĕ хут пĕр харăс персе, ВАПНЯРКА хулипе пысăк чугун çул узелне туртса илнĕ УКРАИНАРИ 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, çав шутра ВАПНЯРКАШАН пынă çапăçусенче пулнисене, ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан çапăçусенче вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. С Т А Л И Н.

1944 çулхи мартăн 16-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне Ж У К О В А

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, паян, мартăн 17-мĕшĕнче, çавăрса илмелли маневр туса, ДУБНО хулине — нимĕçсен оборонин Львов хули енчи паха опорнăй пунктне туртса илнĕ.

ДУБНО хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче ПУХОВ генерал-лейтенантăн, НЕЧАЕВ генерал-лейтенантăн, ЧЕРОКМАНОВ генерал-майорăн çарĕсем, танковăй çарсен генерал-майорĕн КОРОЛЕВАН, ПУШКАРЕВ полковникăн танкисчĕсем тата артиллери генерал-майорĕн КУБЕЕВАН артиллеристсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве паллă тăвас тесе, ДУБНО хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăсĕсене «ДУБЕНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе награда парса тăратас.

Паян, мартăн 17-мĕшĕнче, 22 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици — МУСКАВ, çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуниккĕ хут пĕр харăс персе, ДУБНО хулине тытса илнĕ УКРАИНАРИ 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, çав шутра ДУБНО хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнисене, ТАВ ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан çапăçусенче вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. С Т А Л И Н.

1914 çулхи мартăн 17-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 16-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 16-мĕшĕнче пирĕн çарсем ПРОСКУРОВ хули енче тăшман пехотипе танкĕсен контратакине ăнăçлăн сирсе янă, нимĕçсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк сухатусем кўнĕ.

ВИННИЦА хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Винница облаçĕнчи район центрĕсене—НЕМИРОВ хулипе ТЫВРОВ ялне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—САЛЬНИК, МЕДВЕДКА, СОСОНКА, СТАДНИЦА, ТЯЖИЛОВ, ВИТАВА, ВОРОШИЛОВКА, СУТИСКИ, ЛУКА НЕМИРОВСКАЯ, СТРЕЛЬЧИНЦЫ, КАРОЛИНА ятлă пысăк ялсем тата ТЮШКИ, ГНИВАНЬ ятлă чугун çул станцийĕсем.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, наступление вăйлатса пырса, танковăй соединенисемпе пехота çавтери хăвăрт атакăланипе, ВАПНЯРКА хулипе пысăк чугун çул узелне туртса илнĕ, çапла вара ЖМЕРИНКĂПА ОДЕССА хушшинчи питĕ паха чугун çула татнă, çавăн пекех тата Винница облаçĕнчи район центрне—ТУЛЬЧИН хулине туртса илнĕ, унсăр пуçне халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—ДОЛЖЕК, ГРИНЕНКИ, КРИШИНЦЫ, ВОЙТОВКА, ЛИПОВКА, СЛОБОДА, ШАРАПАНОВКА, СОКОЛОВКА, ГЕРБИНО ятлă пысăк ялсем.

ВАПНЯРКА станцине туртса илнĕ чухне УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: паровоçсем — 12, вагонсем —500, çар пурлăхĕ тиенĕ эшелонсем — 2, автомашинăсем — 1300, артиллерин пысăк склачĕсем тата ытти çар пурлăхĕ нумай туртса илнĕ, халĕ вĕсене шута илеççĕ.

КИРОВОГРАД хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах наступление вăйлатса пынă, Кировоград облаçĕнчи район центрĕсене —БОБРИНЕЦ хулипе РОВНОЕ ялне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — АНДРЕЕВКА, ГЛОДОСЫ, ЕВДОКИМОВКА, ШУТЕНЬКА, КАРКАЗЕЛЕВКА, ГРИГОРОВКА, АЛЕКСЕЕВКА, СОЛОНЦЕВАТКА ятлă пысăк ялсем.

НИКОЛАЕВ хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, Николаев облаçĕнчи НОВАЯ ОДЕССА район центрне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра — МИХАЙЛОВКА, ТРОИЦКОЕ, ХРИСТОФОРОВКА, БАЛАЦКОЕ, НОВО-ДАНЦИГ, ДОБРАЯ КРИНИЦА ятлă пысăк ялсем тата ЛОЦКИНО, ГРЕЙГОВО ятлă чугун çул станцийĕсем. БЕРЕЗНЕГОВАТОЕПЕ СНИГИРЕВКА районĕнче пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкин юлашкийĕсене пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 43 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 42 самолетне персе ўкернĕ.

РЕСПУБЛИКĂНА ОБОРОНĂН ГОСУДАРСТВЕННЫЙ КОМИТЕЧĔН КУÇСА ÇЎРЕКЕН ХĔРЛĔ ЯЛАВНЕ ПАМАЛЛА ТУНĂ ЯТПА ПУЛНĂ РАДИОМИТИНГ

Паян, çĕрле 1 сехетре, республикăна иртнĕ çул тухăçлă тырпул туса илнĕшĕн Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла тунă ятпа радиомитинг пулса иртрĕ.

Митинга, малтанхи кĕске сăмахпа калаçса, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ А. Матвеев юлташ уçать.

Чăваш АССР Çĕр Ĕç Халăх Комиссарне Н. Малов юлташа сăмах параççĕ. Вăл республикăри колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене 1943 çулта 1942 çулхинчен чылай лайăхрах тунине палăртать.

Орденлă Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем чăннипех те вăрçă вăхăтĕнчи хăвăртлăхсемпе ĕçлеме пултарнине кăтартса пачĕç, çак пысăк награда татах та лайăхрах ĕçлеме хушать,—тет Малов юлташ.

Вăрнар райисполкомĕн председателĕ Осипов юлташ районри колхозниксемпе колхозницăсем тăрăшса ĕçленине яр-уçă тĕслĕхсемпе çирĕплетсе парать. Район Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавне иккĕмĕш хут илнĕ.

— Çак пысăк награда шăн савăнса, пирĕн районри колхозниксем кăçал татах та тухăçлăрах тырпул — кашни гектартан 100 пăтран кая мар тырă пухса илме сăмах пачĕ,—тет Осипов юлташ.

Малалла ВКП(б) Шупашкар райкомĕн секретарĕ Караушев юлташ тухса каларĕ. Вăл районри колхозниксен патриотла ĕçĕсем çинчен чаранса тăчĕ. «Урожай» колхозăн вăрлăх çителĕксĕр пулнă. Колхозник В. Е. Егоров çав колхоза хăйĕн тыррине 132 пăт кивçен панă. Патриот пуçарăвне анлăн сарнă. Çавăн пек майпа район вăрлăх çителĕклĕх хатĕрленĕ.

— Республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавне панă хыпар колхозсенче патриотизмăн çĕнĕ хумне çĕклерĕ, — тет Караушев юлташ. — Пирĕн колхозниксем 1944 çулта тырпул тухăçлăхне ўстерессишĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатса ярассишĕн ниме те шеллесе тăмĕç.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Красная Армия» колхозăн бригадирĕ Данилова юлташ вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçĕн опычĕпе паллаштарать. Вăл ертсе пыракан бригада иртнĕ çул кашни гектартан вăтам шутпа 23,5-шер центнер тулă туса илнĕ. Çавăн пекех ырашпа сĕлĕ тухăçлăхне те ўстернĕ. Колхозниксем тунă ситĕнўсемпе лăпланса лармаççĕ. хăйсен пĕтĕм вăй-халне кăçал та Тăван çĕршывпа фронт валли тырпул, апакай, пахча-çимĕç ытларах тунă çĕре параççĕ.

Унтан Йĕпреç МТС-ĕн директорĕ Иванов, Çĕрпў районĕнчи «Ĕмĕт» колхозăн председателĕ Сиворцов юлташсем тухса каларĕç. ВЛКСМ Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ А. Аверьянова юлташ республикăри комсомолецсемпе çамрăксем вăйлă тырпулшăн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн мĕнле кĕрешни çинчен каласа парать. Вăл ялти çамрăксене кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсенче çине тăрса ĕçлеме чĕнчĕ.

Юлашкинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пĕррмĕш секретарĕ И. Чарыков юлташ тухса каларĕ. Республикăри колхозсем ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ўстерессишĕн кĕрешес ĕçри тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри ситĕнўсене палăртса, Чарыков юлташ мĕнпур колхозниксене, колхозницăсене, ялхуçалăх специалисчĕсене тунă ситĕнўсемпе лăпланса лармалла юрамалли çинчен асăрхаттарчĕ, суракине тата пĕтĕм ялхуçалăх çулне кăтартуллăн ирттерме, государство умĕнчи обязательствăсене чыслăн пурнăçа кĕртме чĕнчĕ.

Тăван çĕршыв республикăри колхозниксемпе колхозницăсен ĕçне пысăка хурса хакларĕ

Награда тата лайăхрах ĕçлеме хушать

И. ЧАРЫКОВ

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ

Хаçатсенче икĕ питех те кирлĕ документ — ССР Союзĕн Совнаркомĕ ялхуçалăхĕнчи 1943 çулхи Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн итогĕсем çинчен тата ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1944 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсен государство планĕ çинчен йышăннă постановленисем пичетленсе тухрĕç. Пирĕн республикăри партипе комсомол организацийĕсен, вырăнти советсен, агитаторсен халыхи чыслă ĕçĕ—партипе правительство йышăннă çак постановленисене кашни колхозникпе колхозница, МТС-семпе совхозсен работникĕсем патне çитересси, вĕсем ялхуçалăхне малалла аталантарса пырас тĕлĕшре питĕ пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен ăнлантарса парасси пулса тăрать.

Колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем, комбайнерсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем тăрăшса ĕçленине пула, пирĕн республика иртнĕ çулта ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ўстерес, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне пурнăçа кĕртсе ĕçре чылай пысăк ситĕнўсем турĕç. Чăваш республикинчи колхозсем вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене ăнăçлăн çĕнтерчĕç, вĕсене иртнĕ çул çанталăк начар тăни те чарса тăма пултараймарĕ. Вăйлă тырпул туса илнĕшĕн ССР Союзĕн Совнаркомĕ пирĕн республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш премине памалла турĕ. Кунсăр пуçне, пирĕн республикăри колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе те лайăх ĕçленине палăртнă.

Пирĕн республика вăрçă вăхăтĕнче иккĕмĕш хут ĕнтĕ Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавне илчĕ. Çакă вăл питех те пысăк чыс. Анчах, халех асăрхаттарса хурас пулать, пирĕн ситĕнўсем тем пек пысăк пулсан та, вĕсем никама та каппайса, лăпланса ларма ирĕк памаççĕ. Сталин юлташ пире: тунă ситĕнўсемпе нихăçан та лăпланса лармалла мар, тунă ситĕнўсемпе каппайса пурăнмалла мар тесе вĕрентет. Çулпуçăн çак кăтартăвне манас пулмасть. Анчах та пирĕн хăшпĕр юлташсем çапла шутлама пăхаççĕ: куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялава иккĕмĕш хут пачĕç пулсан, ăна виççĕмĕш хут илме те йывăрах пулмĕ, теççĕ. Çакнашкал сиенлĕ шухăш-кăмăлсене хирĕç талăкланах кĕрешес пулать. Тўрех калама малла: ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттерес ĕçри йывăрлăхсем кăçал виçĕмçулхинчен те, иртнĕ çулхинчен те пысăкрах. Суракине тухас вăхăт çывхарса çитрĕ пулин те, чылай колхозсен вăрлăх çитмест; сахалтарах туртăм вăйĕпех çитес суркунне пирĕн 1943 çулхинчен 25 пин гектар ытларах акса хăварас пулать; çитменнине тата нумай колхозсем кĕрхи сĕртме тумалли плана пурнăçа кĕртмен. Çак йывăрлăхсене халех шута илмелле те вĕсене пĕтерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнмалла.

Пирĕн колхозсем çав йывăрлăхсене çĕнтерме пултараççĕ-и? Нимĕн иккĕленмелли те çук, пултараççĕ. Суракине кăтартуллăн ирттерме пирĕн майсем пур-и? Пур. 1942-мĕш тата 1943-мĕш çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене туса ирттерес ĕçĕн опычĕ çакна кăтартса парать: парти райкомĕсемпе райисполкомсем ĕçе тĕрĕс ертсе пырсан, ĕçе пĕлсе организацилесен, пирĕн колхозсемпе МТС-сем суракине кăçал та кăтартуллăн ирттерме пултараççĕ тата вĕсем çапла тума тивĕçлĕ те. Пирĕн кашни колхоз çывăх вăхăтрах хăйне кирлĕ лайăх пахалăхлă вăрлăха тупса ситерме пултарать. Çакна тума вырăнти ресурссене мобилизацилес пулать, таçтан такам пулăшасса кĕтсе лармалла мар. Колхозсем пĕр-пĕрне вăрлăх парса пулăшас ĕçе, ситмен вăрлăха колхозниксенчен кивçен илес ĕçе вăйлăн сарса ярас пулать.

Суракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăхăн çирĕмкунлăхĕ хушшинче Шупашкар, Елчĕк, Вăрнар тата ытти хăшпĕр районсенчи ялхуçалăх артелĕсем нумайĕшĕсем çавăн пек майпа çуртырри пуссине акса хăварма кирлĕ вăрлăхла пĕтĕмĕшпех тупса çитерчĕç. Юлса пыракан районсенчи хăшпĕр колхозсен вăрлăх пирки çывăхри районсемпе каласса тата лас пулать. Анчах парти райкомĕсен хăшпĕр секретарĕсем, райсовет исполкомĕсен председателĕсем, çĕрĕç органĕсен руководителĕсемпе колхозсен председателĕсем вăрлăх тупса çитерессишĕн хăйсем те тивĕçлипе тăрăшмаççĕ-ха, çитес çулхи тырпулшăн хыпаланмаççĕ. Вăрлăхлăх çĕрулми хăшпĕр районсенче çителĕксĕр. Канаш районĕнче, сăмахран, çĕрулми вăрлăхĕ 9.000 центнера яхăн, Улатăр районĕнче — 7.000 центнер ытла çитмест. Çитмен вăрлăха тахçанах тупса çитерме май пулнă, колхозниксенчен кивçен илме тата çĕрулми тăррине вăрлăхлăх касса хатĕрлеме майсем пулнă. Анчах Канаш районĕ çĕрулми тăрри касса хатĕрлеме ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ панă илана 0,8 процент çес пурнăçланă. Улатăр районĕ 2.500 центнер хатĕрлес вырăнне, çĕрулми тăррисене 75 центнер çеç хатĕрленĕ.

Асăннă районсен руководителĕсенчен—ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсенчен Добродушев тата Горбунов юлташсенчен ыйтасчĕ: кам çине шанса пурăнаççĕ-ха вĕсем?

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ хăйсен постановленийĕнче парти, совет тата çĕрĕç органĕсене çапла тума хушрĕç:

«а) çуркунне акмалли вăрлăхсене пĕтĕмпех тата вăхăтра хывмалла, вĕсен пахалăхне тата мĕнле пăхса усранине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла;

б) начар шăтакан вăрлăхсене лайăх пахалăхлă вăрлăхсемпе улăштарассине организацилемелле;

в) вăрлăх фончĕсене пур культурăсем тăрăх та пĕтĕмпех тасатса, сортласа, çирĕплетсе панă кондицие лартмалла...»

Çураки валли вăрлăх хатĕрлес ĕçре пирĕн çитменлĕхсем нумай-ха. Республика вăрлăх хывмалли тата сортламалли плансене пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртеймен-ха, начар вăрлăхсене лайăх пахалăхлă вăрлăхсемпе улăштарса çитермен-ха. Улатăр, Шăмăршă, Советски, Комсомольски районсенче хывнă вăрлăхăн 50—70 процентне çеç тасатса хунă. Çак районсен ку ĕçре ытти районсенчен юлса пыма нимĕнле сăлтавсем те çук. Тырă сортламалли машинăсем те, çак ĕçе тума колхозниксем те çителĕклех. Сăлтавĕ çакăнта кăна: асăннă районсен руководителĕсем çакнашкал çитменлĕхсене хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ. Вĕсем: пирĕнтен, юлса пыракан районсенчен, ыйтмаççĕ-ха, тесе шутлаççĕ пулас. Çак сиенлĕ шухăш-кăмăлсене халех пĕтерес пулать.

Лашасен ĕçне çăмăллатас шутпа, Елчĕк, Кувакино тата Первомайски районсенчи чылай колхозсен опычĕпе, хуçалăхра тата çул çўрес ĕçре мăйракаллă шултăра выльăхсемпе—колхозсемпе колхозниксен вăкăрсемпе, сĕт сахал паракан ĕнесемпе усă курас пулать. ВКП(б) Обкомĕпе республика Совнаркомĕ вăкăрсемпе ĕнесене ĕçе кўлме вĕрентмелли задание пур районсен те çывăх кунсенчех пурнăçа кĕртмелле тесе кăтартса пачĕç. Ĕне-вăкăрсемпе хуçалăх ĕçĕсенче çывăх кунсенчех усă курма тытăнмасан, суракине ăнăçлăн ирттерессине шанма та йывăр. Анчах çакна та асра тытас пулать: колхозсенчи тĕп туртăм вăйĕ вăл — лаша. Лашасене çураки ирттерме хатĕрлесси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхас пулать. Начарланнă тата вăтăмран та начар ўтлĕ лашасене вăйлă апат çине тăратса кантармалла, ытти лашасемпе вăкăрсене вара, ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленийĕнче кăтартнă пек, — уйхир ĕçĕсем пуçланиччен виçĕ эрне маларах вăйлă апат çине тăратса кантарас пулать.

Машинно-тракторнăй станцисем тракторпа тумалли ĕçсен планне пурнăçа кĕртнĕ пулсан, иртнĕ çулхи ялхуçалăх ĕçĕсенче республика тунă çитĕнўсем татах та пысăкрах пулнă пулĕччĕç. МТС-сем çителĕксĕр ĕçленин тĕп сăлтавĕ — тракторсемпе комбайнсене вăхăтра юсаманни тата начар пахалăхпа юсани пулса тăчĕ, трактористсемпе комбайнерсем хушшинчи ĕç дисциплинин сўрĕкки пулса тăчĕ. Иртнĕ çулхи йăнăшсене шута илес пулать. Партипе совет тата çĕрĕç органĕсен тракторсене лайăх пахалăхпа юсасси çине, горючиссене вăхăтра кўрсе килесси çине, трактористсем хатĕрлесси тата политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхас пулать.

Фронтовой уйăхлăх вĕçлениччен мĕнпур колхозсенче ялхуçалăх машинисене тата транспорт инвентарьне юсаса пĕтермелле. Çак ĕçе Тăвай, Калинино, Вăрнар районĕсенчи ялхуçалăх артелĕсем ăнăçлăн вĕçлерĕ, Елчĕк районĕнчи колхозсем те кĕçех ĕлкĕртеççĕ. Анчах Канаш районĕнче, унта çак ĕçе ăнăçлăн туса ирттерме ытларах майсем пур, 1733 плугран 813 плуг çеç юсанă. Ялхуçалăх машинисем юсас ĕç Шăмăршă, Первомайски районсенчи колхозсенче те начар-ха. Сăлтавĕ—унти ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсемпе райисполкомсен председателĕсем çак питех те кирлĕ ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасси çине шанса ларнинче.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозсен, МТС-сен, совхозсен, вырăнти çĕрĕç органĕсен, партипе совет организацийĕсен 1944 çулхи тĕп задачи—тырпулсен тухăçлăхне пур майсемпе те ўстересси, пухса илекен тĕштырăсен тата ытти ялхуçалăх çимĕçĕсен пĕтĕм хисепне ўстерессн пулса тăрать тесе шутлаççĕ. Çак тĕллеве пурнăçлас тесе, ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăçал кашни колхозпа совхоза обязательнăй йĕркепе тумалли ĕçсем хушрĕç. Çав ĕçсемпе килĕшўллĕн, ялхуçалăх культурисене йышăнпа пусу-çаврăнăшсем тăрăх тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла; çурхи уйхир ĕçĕсене хăвăртрах пуçлас шутпа уйхире уламппа хăмалтан, çумкурăксенчен тасатмалла; тăпрара нўрлĕх ытларах сыхласа хăварас тата çумкурăксене пĕтерес шутпа çуркунне тăпрапа лайăх ĕçлесе çемçетмелле; кашни ялхуçалăх культурине агротехникăн чи лайăх срокĕсенче тата вăрлăха тăпрана лайăх витĕнтерсе акса хăвармалла; тислĕкпе, кĕлпе, торфпа тата ытти тĕрлĕ вырăнти удобренисемпе, пуринчен малтан, техникăллă культурăсемпе çĕрулми тата пахча-çимĕçсем акмалли вырăнсенче май килнĕ таран ытларах усă курмалла.

Пирĕн республикăри колхозсем вăйлă тырпулшăн кĕрешсе пуян опыт пухрĕç. Çав опытпа кăçал анлăн усă курас пулать. Çитес тырпулăн ăнăçлăхне уйхир ĕçĕсене лайăх пахалăхпа туни, агротехника правилисене çирĕппĕн пăхăнса пыни татса парать. Вăрнар, Вăрмар, Елчĕк, Шупашкар районĕсенчи тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсем иртнĕ çул вырăнти удобренисемпе анлăн усă курчĕç, тăпрана лайăх ĕçлесе çемçетрĕç, вăрлăхсене лайăх акса хăварчĕç, калчасене лайăх пăхса çитĕнтерчĕç, çапла вара вăйлă тырпул туса илчĕç. Çак районсем пĕлтĕр вырăнти удобренисене хире кăлармалли задание ирттерсе пурнăçланă. Пăрачкав, Чкаловски, Шăмăршă районĕсенчи нумай колхозсем вара тислĕк сахал тăкнă, суракине кая юлса тухнă, вĕсем тăпра пĕтĕм тирĕпех писсе çитессе кĕтсе ларнă, акас умĕн вăрлăх хатĕрлесе çитереймен пулнă. Çавна пула вĕсем агротехника ыйтнисене пурнăçа кĕртеймен, çавăнпа вара вăйлă тырпул туса илеймерĕç. Апла пулин те çак районсенчи çĕрĕç органĕсем тата нумай колхозсен председателĕсем иртнĕ çулхи йăнăшсене ерипен кăна тўрлетсе пыраççĕ-ха. Çав районсенче хире тислĕк кăларасси начар та çителĕксĕр хăвăртлăхсемпе пулса пырать

Районсем пурте тенĕ пекех ВКП(б) Обкомĕпе республика Совнаркомĕ кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлеме панă заданисене пурнăçларĕç, анчах Чкаловски, Шăмăршă тата Пăрачкав районĕсем çак задание çуррине яхăн та пурнăçлайман-ха. Ыйтас килет: ку ĕç мĕнле йывăрлăхсене пула чаранса тăрать-ха? Унти парти райкомĕсен секретарĕсем тăтăшах туртăм вăйĕ çитменни çине йăвантарма пикенеççĕ. Çак ĕçе тума туртăм вăйĕ те кирлех мар ĕнтĕ. Колхозниксене, комсомолецсене, шкул ачисене ĕçе организацилес пулать кăна. Ку ĕçре ВЛКСМ райкомĕсен работникĕсен те хăйсен чыслă вырăнне йышăнмалла.

Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе савăнса тата Сталин юлташ совет тылĕн ĕçне пысăка хурса хакланипе савăнса, пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем халь вăй-хала шеллемесĕр ĕçлеççĕ, вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш суракине пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Республикăна Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ Ялавне тата иккĕмĕш премине памалла туни колхозниксемпе колхозницăсене тата ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксене вăйлă тырпул туса илессишĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатса ярассишĕн кĕрешес ĕçре çĕнĕ ситĕнўсем тума хавхалантарать. Ялсенчи партипе комсомол организацийĕсен, вырăнти советсен халĕ колхоз хресченĕсен ĕçри патриотла çĕкленĕвне пуçарса ертсе пырас пулать, çав çĕкленĕве суракине кăтартуллăн хатĕрленес ĕçе пăхăнтарас пулать.

Тырпул тухăçлăхне ўстерессишĕн тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатса ярассишĕн икĕ çул хушши кĕрешсе, республика чылай пысăк ситĕнўсем турĕ, терĕмĕр. Çав ситĕнўсене хамăр алăра çирĕплетсе хăварас пулать. Халĕ, вăрçăн йывăр çулĕсенче, тунă ситĕнўсемпе лăпланса лармалли вăхăт мар. Çĕршывпа фронт ытларах та ытларах тырпул, аш-какай тата ытти çимĕçсем ыйтаççĕ. Эпир вĕсене йĕркеллĕн парса тăма тивĕçлĕ, пултаратпăр та.

Кăçал пирĕн 1943 çулхинчен тата лайăхрах ĕçлемелле. Çапла тума хушать пысăк награда!

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VII-мĕш сессине уçасси çинчен

Чăваш АССР Верховный Совечĕн VII-мĕш сессийĕ Шупашкарта 1944 çулхи мартăн 18-мĕшĕнче, каçхине 5 сехетре уçăлать.

Тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çара апат-çимĕç ытлăн-çитлĕн туса парар!

Тăрăшса ĕçленин тивлечĕ

Пирĕн колхоз иртнĕ çулта, тухăçлă тырпул туса илнипе пĕрлех, выльăх-чĕрлĕхсен йышне ўстерес тата вĕсен тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе те начар мар ĕçлерĕ. Эпир выльăхсем усрамалли плана пур енĕпе те иртте́рсе тултартăмăр. Çапла, сăмахран, сурăхсемпе качакасем енĕпе плана 138,5 процент, сыснасем енĕпе 120 процент тултартăмăр. Çав вăхăтрах кашни ĕнерен çулталăк хушшинче вăтамран илсен 1421,6 литр сĕт, пĕр сысна аминчен 16 çăвăр, кашни сурăхран 2,5 килограмм çăм, кашни хурт çемьинчен 34 килограмм пыл илнĕ. Çакăншăн фермăра ĕçлекенсенчен чылайĕшне ĕçшĕн хушса тўленĕ.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене йĕркеллĕн пурнăçласа пырать. Аш-какай памалли обязательствăна колхоз икĕ çулшăн — 1945—46-мĕш çулсемшĕн — парса татрĕ. Фашистла оккупантсенчен ирĕке кăларнă колхозсене пулăшма та эпир 7 сысна, 2 сурăх, 2 ĕне патăмăр.

Пирĕн колхоз членĕсем тăван Хĕрлĕ Çара пур енĕпе те пулăшса пыма тăрăшаççĕ. Кăçал та вĕсем, ăмăртăва сарса пырса, ĕçре тата пысăкрах çитĕнў тума сăмах параççĕ.

А. ФАДЕЕВА,
Жданов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ (Элĕк р.).

Кашни ĕнерен 1528 литр сĕт суса илтĕм

Ĕнерен сĕт ытларах илес тесен, ăна лайăх пăхмалла: вăхăтра апат парса шăвармалла, таса та сутă, ăшă хуралтăсенче тытмалла. Эпĕ кашни çулах хам пăхакан ĕнесенчен планпа палăртнинчен ытларах сĕт суса илетĕп. 1943 çулта акă 8 ĕнерен 12.225 литр сĕт суса илтĕм. Ку вăл кашни сăвакан ĕнерен 1.528 литр илни пулать. Плана иртте́рсе тултарнăшăн мана ĕçшĕн хушса 640 литр сĕт тўлерĕç.

Иртнĕ çулхи ĕçĕн результачĕ уйрăмах çакăнтан килчĕ: ĕнесене хĕл лайăх каçартăм, витесене хамах ăшăтрăм, шартлама сивĕ кунсенче те ĕнесене сивĕ пулмарĕ. Апата тирпейлĕ тыткаларăм, ялан пĕр апат хыççăн тепĕр йышши апат парса пытăм, кунне икшер хут шăварнă, тăмалли вырăнсене яланах тасатса улăм сарса тăнă. Март уйăхĕнче пăрулана ĕнесене силос çитерме пуçларăм. Калас пулать, малтанах вĕсем силос çиесшĕнех марччĕ, эпĕ вĕсене кашни кунах пĕчĕккĕн парса хăнăхтартăм. Пĕр икĕ эрне хушшинче вара ĕнесем çак сĕтеклĕ апата юратса çиме пуçларĕç. Кун хыççăн ĕнесене куллен 2 хутчен силос çитерсе пытăм.

Пирĕн колхозра пăрусене те дояркăсемех пăхаççĕ. Пĕр енчен илсен ку тĕрĕс. Мĕншĕн тесен хăв пăхакан ĕне пăрулана хыççăн пăрушне те пăхас килет. Иртнĕ çулта эпĕ кашни ĕнерен пĕрер пăру илсе вĕсене лайăх ўстертĕм. Кăçал та ĕнесем лайăх пăруларĕç, пăрусем аван ўсеççĕ, вăтамран илсен кашни уйăхрах вĕсем пĕрер пăт, уйрăм пăрусем 19-шар килограмм таран хушăнаççĕ. Пăрусем валли уйрăм пўлĕм пур, малтанхи уйăхĕнче вĕсене кунне 4—5 литр сĕт паратпăр, пĕчĕккĕн утăпа сĕлĕ çиме хăнăхтаратпăр.

Эпĕ кăçал татах та лайăхрах ĕçлеме пултарасса шанса хам çине кашни ĕнерен иртнĕ çултинчен ытларах сĕт суса илме тата пĕрер пăру илсе вĕсене лайăх пăхса ўстерме обязательство илтĕм. Вăл обязательствăна пурнăçлассса шанатăп.

Е. КУЛЬПИНА,
Çитекушкĕнчи «Новый путь» колхозăн доярки (Элĕк р.).

Ĕçшĕн хушса тўлени тухăçлăн ĕçлеме хавхалантарать

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ колхозниксене ĕçшĕн хушса тўлемелли çинчен йышăннă постановлени выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнўсем тума пулăшрĕ. Акă пирĕн иртнĕ çулхи ĕçĕн итогĕсем: пăрусем илес енĕпе район хăйне панă плана 119,8 процент, çăм илессипе — 112,6 процент, çăмарта илессипе — 103,5 процент тултарчĕ, путексемпе сысна çурисем илес енĕпе те плана тултарнă. Урăхла каласан иртнĕ çулта эпир кашни 10 сурăхран 10 путек, пĕр сысна аминчен 11 çăвăр, кашни чăхран 72 çăмарта, кашни сурăхран 2,8 килограмм çăм касса илнĕ. Район сĕт суса илессипе çителĕксĕр ĕçленĕ, план тăрăх кашни ĕнерен 1050 литр сĕт илес вырăнна 1005,3 литр çеç сĕт суса илнĕ.

Уйрăм колхозсем выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ўстерес тĕлĕшпе иртнĕ çулта чаплă çитĕнўсем турĕç. «Новый путь» колхозра кашни ĕнерен 1450 литр, Синерти Жданов ячĕпе тăракан колхозра 1421,6 литр, Урмайри «Çуталла» колхозра 1144 литр суса илнĕ. Шурçари «Комбайн» колхоз кашни сурăхран 3,1 килограмм çăм касса илнĕ тата ытти те.

Ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартса пыракансене партипе правительство йышăннă постановлени тăрăх ĕçшĕн хушса тўлеççĕ. Çапла, районĕпе илсен, иртнĕ çулхи итогсем тăрăх конюхсенчен 25 çынна, пăру пăхакансенчен 5 çынна, сысна пăхакансенчен 25 çынна, сурăх пăхакансемпе дояркăсенчен 102 çынна тата чăх-чĕп ĕрчетекенсемпе хурт-хăмăр ĕрчетекенсенчен 27 çынна ĕçшĕн хушса тўленĕ.

Хитекушкĕнчи «Новый путь» колхозри доярка — скотница Кульпина юлташ 8 ĕнерен 7700 литр сĕт суса илес вырăнне 12.225 литр, урăхла каласан кашни ĕнерен вăтам шутпа 1528 литр суса илнĕ. Çавăншăн ăна ĕçшĕн хушса 640 литр сĕт тўленĕ. Кĕçĕн Тукташри «Сунтал» колхозăн сысна пăхаканĕ Иванова 6 сысна аминчен 86 çăвăр, «Шуçăм» колхозри сысна пăхакан Мартынов 7 амаран 140 çăвăр илсе вĕсене пурне те тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ўстернĕ.

«Комбайн» колхозри сурăхсене пăхакан Елизавета Трофимова хăйне çирĕплетсе панă кашни сурăхран, вăтамран илсен, 2,9 килограмм çăм касса илнĕ, уншăн ăна 3,1 килограмм çăм панă.

Ытти çулсемпе танлаштарсан, иртнĕ çулта конюхсене те нумайĕшне ĕçшĕн хушса тўленĕ. Вăрманкассинчи «Труд» колхозри конюх Васильева 6 кĕсререн 6 тиха илсе пурне те лайăх пăхса çитĕнтернĕ, уншăн ăна ĕçшĕн хушса 120 килограмм тырă, 1250 тенкĕ укçа тўленĕ.

Тăрăшсан выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекенсенчен кашниех ĕçшĕн хушса тўлениие илме пултарать. Ку тĕлĕшпе малашне пирĕн ытларах, тимлĕрех ĕçлес пулать-ха. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен кашни çыннăн хăйне çирĕплетсе панă выльăхран планра кăтартнă чухлĕ çеç мар, унтан чылай ытларах çăвăрсем, ытларах сĕт, çăмарта, çăм илме тăрăшмалла.

Выльăхсен продуктивноçне ўстерес тесен, вĕсене лайăх пăхмалла—ăшă та таса çуртсенче усрамалла, вăхăтра апат, шыв памалла, айĕсене тасатмалла. Хальхи вăхăтра çăвăрлакан тата пăрулакан çамрăк выльăхсене уйрăмах лайăх пăхмалла. Вĕсене усрама кирлĕ условисем туса памалла. Пирĕн задача — кăçал татах та лайăхрах ĕçлесе, Хĕрлĕ ялава хамăр аллăрах хăварасси пулать.

А. ВОЛКОВ,
Элĕк райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Ĕçе юратни кирлĕ

Сысна ферминче эпĕ виççĕмĕш çул ĕçлетĕп. Ĕçе юратса тунăран, юлашки çулсенче эпир сыснасем ĕрчетес тĕлĕшпе чылай паллă çитĕнўсем турăмăр. 1942 çулта 7 амаран 115 çăвăр илнĕ пулсан, 1943 çулта вара 140 çăвăр пăхса çитĕнтертĕм; çакă вăл кашни амаран, вăтамран шутласан, 20 çăвăр илни пулать. Вилнисем пĕрре те пулмарĕç.

Çавăн чухлĕ çăвăра эпĕ мĕнле майпа илнĕ-ха? Сыснасем манăн çулталăкра 2 хут çăвăрларĕç. Çурисене 2—3 эрнене çитсен апат пама тытăнатăп. Вĕсен апачĕ —хытă пиçĕтнĕ ырашпа пăрса тата кăмрăк, тăм, шăмă çăнăхĕ. Çуллахи вăхăтра кашни кунах 2—3 хут çуса тăнă. Тырă вырса пуçтараччен уя кăларман, вĕсене эпир уйрăмăн пăхнă.

Сыснасене хĕл каçма та начар мар условисем туса панă. Вĕсем ăшă та çутă пўлĕмсенче пурăнаççĕ, вĕсене куллен 2 хутчен кăларса çитеретпĕр. Апата ан таккалаччăр тесе, эпир апат памалли валашкасенче кашни сысна валли уйрăм пўлĕмсем тунă. Хальхи вăхăтра сыснасене эпир çĕрулмипе сĕлĕ арпине пăтратса паратпăр, тепĕр чухне вĕтетнĕ утă паратпăр, кĕркунне тата клевер утине те вакласа панă. Пирĕн апат çителĕклĕ, эпир ăна тирпейлĕн тыткалатпăр.

Сыснасем лайăх çăвăрлаччăр тесен, вĕсене çăвăрлас умĕн уйрăмах лайăх пăхмалла. Вĕсене эпир уйрăмăн çитерсе, уйрăм çĕрте пăхатпăр. Вĕсем çак уйăхра çăвăрлама пуçлаççĕ, эпир вĕсене кĕтсе илме хатĕр.

Сыснасене тĕрĕс-тĕкел пăхса çитĕнтерсен, паллах, вĕсем колхоза пысăк тупăш параççĕ. Эпир иртнĕ çулта кăна сыснасем сутса 40.000 тенке яхăн тупăш илтĕмĕр, кашни колхозник семьине сысна çурисем пăтăмăр, государство умĕнчи обязательствăсене парса татрăмăр.

Кăçал эпĕ тата ытларах вăй хурса ĕçлетĕп. Манăн обязательство — кашни сысна аминчен 20 çăвăртан кая мар илсе, вĕсене пурне те тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ўстересси. Çакна пурнăçлассине эпĕ хытă шанса тăратăп.

А. МАРТЫНОВ,
Витесутĕнчи «Шуçăм» колхозри сысна пăхакан (Элĕк р.)

Кăçал тата лайăхрах ĕçлеме пулатпăр

Иртнĕ çул, çанталăк япăх тăнă пулин те, уйри тырпула вăхăтра та таккаламасăр пухса кĕртрĕмĕр, государствăна тырă, пахча-çимĕç тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем срокчен парса татнă. Колхозниксем пĕтĕм ĕçе фронта ытларах пулăшас шухăш-кăмăлпа туса пычĕç.

Кăçал эпир хамăр умма пысăк тухăçлă тырпул туса илес задача лартрăмăр. Вăрлăхсене сортланă тата кондицие лартнă, ялхуçалăх инвентарьне пĕтĕмпех юсанă, уя 1100 лав тислĕк кăларнă, кĕл 14 центнер, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 8 центнер хатĕрленĕ. Тислĕк кăларнă çĕрте кашни кун 7 лаша ĕçлет.

Ака вăхăтĕнче туртăм вăйĕ пысăк выран йышăнса тăрать. Эпир кашни лашапа туллин усă курма шутлатпăр. Калас пулать, пирĕн лашасем начар мар. Мĕншĕн тесен эпир вĕсене кирлĕ пек, нормăпа тăрантаратпăр. Суракиччен çитерме халех 40 центнер посыпка авăртнă тата 54 центнер сĕлĕ, 60 центнер утă уйăрса хăварнă. Урăхла каласан, пирĕн кашни лаша пуçне 4,5 центнер сĕлĕпе посыпка, 3 центнер утă пур. Акара 12 лаша, сўрере 9 лаша ĕçлемелле. Вăрлăхсем турттарнă çĕрте тата ытти çăмăлтарах ĕçсенче эпир вăкăрсемпе усă куратпăр.

П. БЫКОВ,
«Труд» колхоз председателĕ Элĕк р.)

Выльăхсен йышне ўстерсех пыратпăр

Выльăхсен йышне эпир пĕтĕмпех камăран çамрăк выльăхсене тĕрĕс-тĕкел пăхса ўстернипе ĕрчетсе пыратпăр. Кашни çул тенĕ пекех пирĕн çамрăк выльăхсем лайăх ўссе çитĕнеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене лайăх пăхаççĕ. Пăрусем, путексем тата сысна çурисем валли пирĕн ятарласа тунă ăшă та çутă çуртсем пур, вĕсене пăхма шанчăклă çынсене уйăрнă.

Паянхи куна колхозра 10 ĕне, 32 сурăх пăрулапă. Пăрусемпе путексем пурте сывă, лайăх çитĕнеççĕ. Выльăхсем валли колхозăн утă-улăм та çителĕклĕ. Ĕнесене эпир халь, утă-улăм панисĕр пуçне, улăма тураса, тăварланă ăшă шывпа пăтратса паратпăр, сыснасене утă çăнăхĕ, арпа тата çĕрулми хутăштарса тўсе çитеретпĕр, çанталăк ăшăтсан силос пама пуçлатпăр.

Выльăха лайăх пăхни унăн тухăçлăхне ўстерме пулăшать. План тăрăх пирĕн ĕнерен 900 литр сĕт суса илмеллеччĕ, эпир 1.000 литр суса илтĕмĕр. Çавăн пекех кашни сурăхран 2.100 грамм çăм илес вырăнне 2.300 грамм илтĕмĕр.

А. ИВАНОВ,
Мăн Шĕвĕшри «Правда» колхоз фермисен заведующийĕ (Элĕк р.)

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри канашлăвĕн участникĕсем. Варринче—ВКП(б) Элĕк райкомĕн секретарĕ М. Федотов.

П. ДАНИЛОВ фотоўкерчĕкĕ.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатса пырар

Пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче мĕнпур ĕçе фронт интересĕсемшĕн туса пыма тăрăшаççĕ. Вĕсем фронтпа çĕршыва ялхуçалăх продукчĕсем йĕркеллĕ парса тăрассишĕн хăйсен вăйне, пултарулăхне шеллемесĕр ĕçлеççĕ.

Район 1943 çула начар мар тĕслĕхсемпе вĕçлерĕ. Иртнĕ çулта эпир уйрăмах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе чаплă ĕçсем турăмăр. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура пирĕн район 1942 çулта союзри виççĕмĕш преми, иртнĕ çулта республикăра пĕрремĕш преми тата Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне икĕ хутчен илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла аталантарса пырас ĕçре СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕхсен йышне ўстермелли тата вĕсен тухăçлăхне хăпартмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени çав тери пысăк вырăн йышăнса тăчĕ. Иртнĕ çулта район ĕнесемпе вăкăрсен йышне — 43,1 процент, сыснасен йышне — 16,2 процент, сурăхсемпе качакасен йышне — 39,4 процент ўстерчĕ. Кăçалхи январь уйăхĕ тĕлне пирĕн колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана çапла тултарчĕç: мăйракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 124,5 процент, сыснасем енĕпе — 116,7 процент, сурăхсемпе качакасем енĕпе — 114,6 проц., пыл хурчĕсем енĕпе — 138 процент.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе уйрăмах Синерти Жданов ячĕпе тăракан (председателĕ Фадеева юлташ), Витесутĕнчи «Шуçăм» (председателĕ коммунист Капитонов), Вырăс Сурăмĕнчи «Доброволец» (председателĕ коммунист Бочков) тата ытти чылай колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем пур выльăхсем енĕпе те фермăсене комплектласа çитернĕ тата вĕсен тухăçлăхĕ ўссе пырать. Çапла, сăмахран, Жданов ячĕпе тăракан колхоз лашасем усрамалли плана 100 процент, ĕнесемпе вăкăрсем енĕпе — 110 процент, сыснасем енĕпе — 120, сурăхсемпе качакасем енĕпе—138,5 процент тултарнă.

Коммунист Николаев юлташ ертсе пыракан «Трудовик» колхоз та юлашки çулсенче пысăк улшăнусем турĕ, çав колхозра планпа палăртнинчен ытларах выльăх-чĕрлĕх усраççĕ тата вĕсен йышĕ ўссех пырать.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре çитĕнĕвсем эпир мĕнле турăмăр-ха? Чи малтанах, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе юратакан работниксене суйласа илтĕмĕр, вĕсене вĕрентес тĕлĕшпе сахал мар мерăсем йышăнтăмăр. Районра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекен кадрсене çителĕклĕ чухлех тупса хатĕрленĕ. Халĕ пирĕн районра 8 ветработник, колхозсенче 10 ветфельдшер, зооветучастоксенче 5 санитар, 6 зоотехник пур. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсенчен нумайĕшне кĕске срокла семинарсем витĕр вĕрентсе кăларнă. Сăмахран, ферма заведующийĕсем 72 çын, старши конюхсем — 75 çын, свинарьсем — 68 çын, конюхсем — 105 çын, пĕтĕмпе вара 517 çын хатĕрленĕ.

Ку ĕçе эпир халĕ те пĕр чарăнмасăр туса пыратпăр. Хальхи вăхăтра районра темиçе тĕрлĕ курссем ĕçлеççĕ.

Калас пулать, эпир иртнĕ çулта выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрлентĕмĕр. Районĕпе илсен, выльăх апачĕсем — тырă 103,2 процент, шултăра апат — 111,8 процент, силос — 162 процент хатĕрленĕ. Вĕсемсĕр пуçне тата 57 тонна йĕкел, çулçă-милĕксем 1080 лав, çулçăллă апатсем 2135 лав хатĕрленĕ. Вăл апатсене, пур колхозсенче те тенĕ пекех, фермăсен заведующийĕсемпе старши конюхсен аллине актпа çирĕплетсе панă тата план тăрăх расходлаççĕ.

Пирĕн районри колхозниксемпе колхозницăсем обществăллă выльăх-чĕрлĕхсен йышне тата унăн продуктивноçне ўстерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем турĕç пулин те, пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те пур-ха. Уйрăм колхозсем («Самолет», «Челюскин», «Ударник») паян кунччченех фермăсене комплектласа çитерме тата кайăк-кĕшĕк усрамалли плана тултарман. Район чăх-чĕпсем усрамалли плана 90,5 процент, кроликсем енĕпе — 43,3 процент çеç тултарнă. Районра çамрăк выльăхсем вилни те пысăк çитменлĕх пулса тăрать. Иртнĕ çулта, акă, пăрусен 21,4 проценчĕ, сысна çурисен 15,8 проценчĕ, путексен 12,8 проценчĕ вилнĕ. Çакă вăл, пĕр енчен, выльăхсене хĕл каçармашкăн хуралтăсене начар хатĕрленинчен, ама выльăхсене начар пăхнинчен килет, тепĕр енчен — уйрăм колхозсенче выльăх пăхакансем тўрĕ кăмăлпа ĕçлеменнинчен килет. Малашне ку çитменлĕхе тĕппипех пĕтермелле.

Районри колхозсем лашасем ĕрчетмелли плана ытлашшипех иртте́рсе тултарнă, тихасем илмелли плана вара 129 процент тултарнă. Чылай çĕрте лашасем пăхас ĕç лайăхланчĕ. Анчах уйрăм колхозсенче лашасене киревсĕр пăхассине халĕ те пĕтермен-ха.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тунă çитĕнўсем куç умĕнчех. Анчах унпа лăпланса ларма пултараймастпăр. Пирĕн задача — выльăхсен йышне ялан ўстерсе, йышлатса пырасси. Халĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре чи хĕрўллĕ тапхăр пырать. Кашни пăрулана пăрупа пўтеке, сысна çўрине тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ўстермелле.

Фермăра ĕçлекенсен квалификацине хăпартас тĕлĕшпе те чылай ĕçлемелле. Мĕншĕн тесен халь фермăсенче пуринчен ытла çамрăксем, хĕрарăмсем ĕçлеççĕ.

Пирĕн район вăйлă тырпул туса илессипе выльăх-чĕрлĕх йышне ўстерессишĕн кĕрешес тĕлĕшпе кăçал Советски районна ăмăртăва чĕнчĕ. Çав ăмăртура малти рете тухассишĕн халь колхозсенче кĕрешў сарăлса пырать.

М. ФЕДОТОВ,
ВКП(б) Элĕк райкомĕн секретарĕ.

Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ Маршал И. В. Сталин патĕнче поляк армийĕн командованийĕ ячĕпе пулса иртнĕ апатлану

Поляк çарĕсен корпусĕнчен поляк армийĕ тунă май, Оборонăн Государственный Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин Маршал мартăн 16-мĕшĕнче Кремльте ССР Союзĕн территорийĕнчи поляк армийĕн командованийĕ ячĕпе апатлану туса иртте́рнĕ.

Апатланура çаксем пулнă: поляк армийĕн командующийĕ З. М. Берлинг генерал-лейтенант, К. К. Сверчевский генерал-майор, Б. И. Полторжицкий генерал-майор, Б. А. Киневич генерал-майор, В. М. Бевзюк генерал-майор, А. Ф. Сивицкий генерал-майор, С. С. Галицкий полковник, Л. А. Буксемский полковник, И. И. Межицан полковник, А. С. Модзолевский полковник, К. А. Бабян полковник, А. Л. Завадский подполковник, И. Г. Гавронский подполковник, Я. А. Правин подполковник, М. З. Метковский майор, Э. И. Охаб капитан.

Поляк патриочĕсен Союзĕнчен апатланура çаксем пулнă: А. В. Витос, Б. Р. Дробнер, академик И. О. Парнас, Л. Б. Хвистек, А. Ж. Ендриховский, Ю. Я. Штахельский, С. О. Шкшешевский, С. Ф. Радкевич, Я. И. Берман, Э. Л. Зоммерштейн. Поляк патриочĕсен Союзĕн председателĕ Василевская юлташ, чирлĕ пирки, апатланура пулайман.

Совет Союзĕ енчен апатланура çаксем пулнă: В. М. Молотов, Маршал К. Е. Ворошилов, А. И. Микоян, Л. М. Каганович, Г. М. Маленков, Л. П. Берия, А. С. Щербаков, Н. А. Вознесенский, авиаци Маршалĕ А. Е. Голованов, танковăй çарсен Маршалĕ Я. Н. Федоренко, арми генералĕ А. В. Хрулев, арми генералĕ А. И. Антонов, генерал-полковник Ф. И. Голиков, авиаци генерал-полковникĕ А. В. Никитин, Госбезопасность комиссарĕ Г. С. Жуков.

Апатлану Совет Союзĕпе поляксен туслăхне кăтартнă, кăмăллă иртнĕ

Ют çĕршывесенче

Рузвельт заявленийĕ

ЛОНДОН, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, паян Рузвельт президент çапла каланă: «Финлянди нацистла Германи майлă пулса, пирĕн цивилизацин ылханлă тăшманĕсемпе юнашар тăрса кĕрешни мана та, Пĕрлешўллĕ Штатсен халăхне те питĕ кўрентерчĕ. Финн халăхне халĕ çав ирсĕр туслăхран тухма май пулнăччĕ. Финн халăхĕ хăй Германи майлă пулса вăрçас вăхăта мĕн чухлĕ малалла тăсса пырать, хăйĕн малашне тўссе курмалли пысăк хуйхипе асапне çавăн чухлĕ ытларах ўстерсе ярать. Эпĕ çапла шутлатăп: Финляндин халĕ Германи майлă пулса вăрçма пăрахма май пур. Американецсем пурте Финляндин чăнахах та çапла тăвассине чунтан кĕтсе тăраççĕ», — тенĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ШТУТГАРТА, МЮНХЕНА ТАТА БРАУНШВЕЙГА ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин «Москито» йышши бомбардировщикĕсем Дюссельдорф хулине тапаннă.

Америка бомбардировщикĕсем паян вăтам Германири, Бельгири тата Францири çар объекчĕсене атакăланă.

ЛОНДОН, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин 1.000 ытла йывăр бомбардировщикĕ Германие тапаннă, 3.000 тонна ытла бомба пăрахнă. Пуринчен ытларах Штутгарта тапаннă. Çавăн пекех тата Мюнхен çине бомба нумай пăрахнă. Çурçĕр-Хĕвеланăç Германири объектсене те тапаннă. Йывăр бомбардировщиксем Амьенри чугун çул объекчĕсене атакăланă. Каялла 40 бомбардировщик таврăнман.

ЛОНДОН, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 15-мĕшĕнче Америка бомбардировщикĕсем Брауншвейга тапаннă.

СОФИЯ ХУЛИНЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: иртнĕ кас союзниксен бомбăсем пăрахакан вăтам тата йывăр авиацийĕн пысăк вăйĕсем София хулине анăçлăн тапаннă.

ГЕРМАНИ САМОЛЕЧĔСЕМ АНГЛИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Мартăн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсен 100 самолетне яхăн Лондона тата Англин Кăнтăрпа Кăнтăр-Хĕвелтухăç пайĕнчи районĕсене тапаннă. Нимĕç бомбардировщикĕсем Лондон хули патне пĕр харăсах хĕвелтухăç енчен тата кăнтăр енчен пыма хăтланнă. Анчах та зенитнăй артиллери питĕ вăйлă пеннипе нимĕç самолечĕсем хăйсен бомбисене вим тĕллĕ-паллисĕр пăрахнă. Акăлчансен каçхи истребителĕсен нимĕç самолечĕсен çак тапăнăвне сирсе янă чухне питĕ хаяррăн çапăçнă. Кун пек хаяр çапăçу ку çулта пулман-ха. Нимĕçсен 13 самолетне персе ўкернĕ. Лондонри районсенчен пĕринче халăх пурăнакан çуртсем ишĕлсе аннă. Ача больницине сиенленĕ. Лондонăн центртри районĕ çине вут тивертекен бомбăсем нумай пăрахнă. Çăлакан командăсем çĕрĕпех ĕçленĕ. Вилнисемпе аманнисем пур.

АВСТРИ ХУЛИСЕНЕ ССР СОЮЗĔН ОККУПАЦИЛЕНĔ РАЙОНĔСЕНЧЕН ТАРНА НИМĔÇСЕНЕ ВЫРНАСТАРМА ЭВАКУАЦИЛЕÇÇĔ

Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, Австри гитлерла влаççем Австрин нумай хулисене эвакуациленмелли çинчен распоряжени пичетлесе кăларнă. Çав распоряжени гитлеровецсем халичченхи ССР Союзĕн оккупациленĕ районĕсенче пурăннă, анчах халь унтан васкавăн таракан темиçе пин нимĕçсе Австри хулисене вырнаçтарас пирки пичетлесе кăларнă. Çавăн пек тарса килнĕ нимĕçсем пĕр Инди провинцийĕнче кăна 33.000 çын шутланаççĕ. (ТАСС).

АМЕРИКА КОНГРЕСĔН ЧЛЕНĔСЕНЕ АНГЛИЕ ЧĔННИ

ЛОНДОН, мартăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: мартăн 14-мĕшĕнче Англи парламентăн икĕ палати те пĕр сасăпа пулса, Америка конгресĕн членĕсене Англие килсе курма чĕнсе уйрăм резолюци йышăннă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, Фронтăн пур участокĕсенче те патрульсем кĕрешнĕ. Авиаци Турин хулинчи сортировка станцийĕ çине тата Рим хулинчен çурçĕртехри икĕ узловой станци çине бомбăсем нумай пăрахнă. Ытти соединенисем тăшман çарĕсем пухăнса тăнă вырăнсене тапаннă.

ЛОНДОН, мартăн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: союзниксен пехотипе танкĕсем, артиллери пулăшса пынипе, Кассино хулине атакăланă. Çав хула çине малтан бомбăсем нумай пăрахнă. Анцио патĕнчи плацдарма (Римран кăнтăрта-рахра) союзниксен çарĕсем тăшманăн тĕреклетнĕ икĕ пунктне туртса илнĕ. Американецсен 5-мĕш армийĕн тата акăлчансен 8-мĕш армийĕн пĕтĕм фрончĕ таккăшĕпех малти отрядсем тăшманпа тытăçа-тытăçа илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Союзниксен авиацийĕн пысăк вăйĕсем ĕнер Кассино хули çине бомбăсем пăрахнă, хăйсен çĕр çинче çапăçакан вăйĕсене пулăшса пынă.

Союзниксен авиацийĕн ытти соединенийĕсем тăшман объекчĕсене атакăланă. Союзниксен Вăтаçĕр тинĕсĕнчи сывлăш çар вăйĕсем 2.500 вĕçеве яхăн тунă.

ЛĂПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, мартăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпка океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешўллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Хаувейпе Бутьолуо утравĕсем çинче (Адмиралтейство утравĕсем) Японн çарĕсем хирĕç тăпине çĕмĕрсе тăкнă.

Союзниксен çарĕсем ытти чаçĕсем Элеонора заливĕн сыранне тухса аннă (Çĕнĕ Британи).

Çĕнĕ Гвинея утравĕн çурçĕр сыранĕ патĕнче союзниксен авиацийĕ Японин 10-шар пин тонна таккан виçĕ суднине атакăланă. Икĕ суднине путарнă, виççĕмĕш судни шыв хĕррине туххă ўкнĕ.

Ĕнер Бирмăра Разабил районĕнче тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ темисе пунктне туртса илнĕ

ФРАНЦУЗ ПАТРИОЧĔСЕН 4000 КИЛ-ÇУРТНЕ ПĔТЕРСЕ ТĂКНĂ

ЖЕНЕВА, мартăн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарире туха тăракан «Журналь де Женев» ятлă хаçат çапла пĕлтерет: Гитлер оккупанчĕсемпе Виши «правительствин» полици отрячĕсем ЭН департаменчĕнче партизан отрячĕсене пулăшса тăракан французсен 4.000 çуртне çунтарса янă.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ

Çар чаçне пулăшуллă хуçалăхра ĕçлеме директор, бухгалтер, счетовод, машинистка, зоотехник, агроном кирлĕ. Вĕсене куна виçĕ хут апат çитереççĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла-Маркса, 6.
2—2.

Заготзерно Шупашкарти пунктне вальцлă армана ĕçлеме çакăн пек çынсем кирлĕ: вальцевойсем, масленщиксем, мотористсем, электромонтерсем, выбойщиксем тата рабочисем.
Заготзерно пункчĕн конторине пырса ыйтмалла.
2—2.

Шупашкарти табак фабрикине çакăн пек работниксем кирлĕ: пулăшуллă хуçалăх заведующийĕ, снабжени тĕлĕшпе ĕçлекен работниксем, пулăшакан раб.чисем, эконоист.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, Чувашская ул., дом 69, Табачная фабрика, отдел кадров.
2—2.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00583 Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59Х42 п. л Тираж 14.400 экз.